*Асран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

# Хресчен сасси

25 (2612) №
Хакĕ ирĕклĕ

2016
çĕртме
30

1991 çулхи ака уйăхĕн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă

КĔÇНЕРНИКУН





Сăнÿкерчĕксене www.cap.ru сайтран илнĕ

# Туслăхпа пĕрлĕх уявĕ

**Иртнĕ эрнере Чăваш Ен хăйĕн тĕп уявне – Республика кунне – чаплă палăртрĕ. Çавна май тĕп хулари Хĕрлĕ тÿремре тĕрлĕ мероприяти пулчĕ. Халăх пултарулăхĕн Пĕтĕм çĕршыври «Раççей çăлкуçĕсем» фестиваль кăçал 24-мĕш хут иртрĕ, Пĕтĕм Раççейри «Руç ăстисем» конкурс вара – 14-мĕш хут. Унта çĕршыври 19 регионтан 34 ăстаçă хутшăнчĕ. Чăваш Ен чысне 20 алĕç маçтăрĕ хÿтĕлерĕ. Вĕсен пултарулăхне 9 номинаципе хакларĕç. Конкурса Чăваш Енри Ĕç çыннин çулталăкне халалларĕç.**



### «Шупашкара малашне те килĕпĕр»

«Сирĕн ĕçĕрсем – пысăк пуянлăх. Мĕншĕн тесен эсир чуна парса тăрăшатăр», – терĕ Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев тĕрлĕ регионран килнĕ ăстаçăсемпе тĕл пулнă май.

Леонид Бобылев (Чулхула облаçĕ) «Руç ăстисем» конкурсăн гран-прине илме тивĕçрĕ. Ăна «Утă çулни çинчен хывнă юрă» ĕçĕшĕн пачĕç. Леонид халăх искусствине ачаранах кăсăкланать: металран, тиртен, тăмран, хурăн хуппинчен халăх музыка инструменчĕсем тăвать.

Халăх пултарулăхĕн «Раççей çăлкуçĕсем» фестиваль программи те пуян пулчĕ. Унта кăçал çĕршывăн 16 регионĕнчен 17 коллектив хутшăнчĕ. Унсăр пуçне республикăри пултарулăх ушкăнĕсем те куракана хăйсен юрри-ташшипе савăнтарчĕç.

Чăваш Ен хăнасене хапăл туни, çавна май туссен йышĕ çулсерен ÿсни, тăван культурăна упраса хăварма пултарни, ăна малашне те аталантарни çинчен каларĕ республика ертÿçи фестивале уçнă май. Хăш-пĕр коллектив 24 çул хушшинче çак мероприятие пĕрре мар хутшăнать. Сăмахран, Рязань облаçĕнчен килнĕ «Звонница» халăх коллективĕ. «Пĕрремĕш хут эпир фестивале 2013 çулта хутшăнтăмăр. Пире тараватă кĕтсе илнĕрен Чăваш Ене час-часах килме хатĕр. Кунта пĕр-пĕрин опычĕпе паллашма май пур», – терĕ Людмила Богатова ушкăн ертÿçи.

Севастопольтен килнĕ хăнасене те уяв питĕ килĕшнĕ. «Пире халиччен ниçта та Шупашкарти пек тараватă кĕтсе илмен, – теççĕ вĕсем. – Хула таса, тирпейлĕ, халăхĕ кăмăллă, ăш пиллĕ. Чăваш Енрен уйрăлас килмест. Эпир малашне те килĕпĕр кунта. Сирĕн тараватлăха чĕресенче упрăпăр».

Раççей хăйĕн историйĕпе, тĕрлĕ халăх йăли-йĕркипе, культурипе пуян пулнине, çирĕп туслăхпа юратăва кăтартса пачĕ «Раççей çăлкуçĕсем» фестиваль.

Уяв кунĕсенче Чăваш патшалăх операпă балет театрĕнче «Раççей регионĕсем – çитĕнĕвĕн çĕнĕ хутлăхĕсем» IX Шупашкар экономика форумĕ иртрĕ. ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев хăнасене социаллă пурнăçри ырă улшăнусемпе паллаштарчĕ. Кăçалхи 5 уйăхрине пĕлтĕрхи çак тапхăртипе танлаштарсан промышленноç производствин индексĕ – 114, ял хуçалăхĕн 110 процентпа танлашнă.

РФ Патшалăх Думин Вĕренÿ комитечĕн председателĕн заместителĕ Алена Аршинова çамрăксене юридицие, экономикăна вĕрентме малашне бюджет вырăнĕ сахалрах парассине пĕлтерчĕ. Инженер, биолог, химик тата ытти специалиста суйласа илекенсен йышне ÿстерессишĕн ĕçленине палăртрĕ.

Германири ĕçлĕ çынсемпе çыхăнусем йĕркелеме пулăшакан эксперт Инна Армстронг чăваш пайтаçисене нимĕçсен экономикин конъюктурипе, пуян практикипе усă курма сĕнчĕ.

### Фермер кунĕ

Чăваш Республикин кунĕнче Шупашкарта Пĕтĕм чăвашсен Акатуйĕ иртрĕ. Сумлă уява йăхташăмăрсем тĕрлĕ регионтан – Мускавран, Чĕмпĕртен, Саратовран, Пермьрен, Пушкăртстанран, Тутарстанран, Пензăран, Самартан, Оренбургран тата ытти тăрăхран килсе çитрĕç. Эстони чăвашĕсем те Акатуйран юлмарĕç.

Халăх пултарулăх коллективĕсем «Çĕршыв илемĕ» юрăпа уява усрĕç. Каярахпа вăл Анне палăкĕ çывăхĕнчи тÿремре малалла тăсăлчĕ. Чăваш юрри-кĕвви чылайччен таврара янăрарĕ.

Ĕç çыннин çулталăкне шута илсе Акатуй вăхăтĕнче кăçал пирвайхи хут Фермер кунĕ иртрĕ. Республикăри фермерсем чи малтанах тĕп хулари «Шупашкар – Арена» Пăр керменĕнче «çавра сĕтеле» пуçтарăнчĕç. ЧР ял хуçалăх министрĕн заместителĕ Александр Жуков республикăри фермер хуçалăхĕсемпе çемье фермисене пулăшас тĕллевпе пурнăçланакан программăсем çинчен пĕлтерчĕ.

2-мĕш стр. ➔

## Ĕçлĕ тĕлпулусем

**Çак эрне пуçламăшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Мускавра РФ Правительство çуртĕнче республикăна федераци бюджетĕнчен укça-тенкĕ килессипе çыхăннă ыйтусемпе тĕлпулусем иртнĕ.** Тĕслĕхрен, республикăра ĕçсĕрлĕх лару-тăрăвне çăмăллатас тĕлĕшпе йĕркелемелли хушма мерăсене сÿтсе явнă. Унсăр пуçне онкологи диспансерĕн хирурги корпусне хута яма субсидин иккĕмĕш пайĕпе тивĕçтерессипе çинчен калаçнă. Республика бюджетне шайлаштарма хушма дотаци уйăрас ыйтăва та пăхса тухнă.

Вишĕм кун Михаил Игнатьев Пермь хулинче иртнĕ федерацин Атăлçи округĕн Канашĕн ларăвне хутшăннă. Унта патшалăх влаç органĕсем граждансен обществине аталантарассипе тата коммерцилле мар, социаллă пĕлтерĕшлĕ организацисене пулăшассипе мĕнле ĕçленине тишкернĕ.

## Çĕнтерÿпе таврăнчĕç

**Çу уйăхĕнче Шупашкар лесничествинче тата "Шупашкар-Арена" Пăр керменĕнче йывăç тÿнтерекенсем професси ăсталăхĕпе конкурсра тупăшнăччĕ.** Унта Чăваш Республикинчен, Киров тата Чулхула облаçĕсенчен мĕнпурĕ 12 вăрманçă хутшăннăччĕ. Судьясен ушкăнĕ палăртнă тăрăх – çĕнтерÿçĕ ятне Атăл леш енчи вăрман территорийĕнче тăрăшакансем (Артем Шашков, Сергей Субботин, Андрей Епифанов, Андрей Веселицкий) тивĕçнĕччĕ.

Çĕртме уйăхĕн 23-24-мĕшĕсенче вĕсем Сыктывкар хулинче иртнĕ "Йывăç тÿнтерекен-2016" Раççей чемпионатне хутшăнчĕç, çĕршывăн тĕрлĕ регионĕнчен пуçтарăннă 30 команда хушшинчи çивĕч кĕрешÿре иккĕмĕш вырăн çĕнсе илчĕç. Карели Республикин командине кăна хăйсенчен иртерчĕç, Тутарстана вара виççĕмĕш вырăна хăварчĕç.

Юниорсем хушшинче пĕлтĕрхи пекех Андрей Веселицкий пĕрремĕш вырăна тухрĕ. Вăл Раççей командин йышĕнче кĕркунне Польшăра иртекен тĕнче чемпионатне хутшăнĕ.

## Пăхаттир пуçлăхсем

**Спорт, туслăх тата пĕрлехи тытăм уявĕ пулнине палăртрĕ ЧР муниципалитет йĕркеленĕвĕсен канашĕн правлени председателĕ, Шупашкар хула пуçлăхĕ Леонид Черкесов муниципалитет йĕркеленĕвĕсен пуçлăхĕсен тата служащийĕсен кунĕ пирки.** Кăçал вăл тăххăрмĕш хут Куславкка районĕнче иртрĕ. Мероприятие уçнă май Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев республика правительстви вырăнти хăйтытăмлăх органĕсемпе пысăк ĕç тунине, çакна кура вăл инвестици тĕлĕшĕнчен илĕртÿллĕ регионсен йышĕнче пулнине асăнчĕ.

"Пăхаттир пуçлăх" номинацире кăçал Шупашкар районĕнчи Кăшавăш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Сергей Мульдияров мала тухрĕ. Иккĕмĕш вырăнта – Тăвай районĕнчи Йăнтăрччă ял тăрăхĕнчи Анатолий Семенов, виççĕмĕшĕнче – Вăрнар районĕнчи Мăн Яваш ял тăрăхĕнчи Андрей Васильев.

# Уй-хиртен – сентре çине

**Анлă территоринче такăр, таса. Ешĕл газон, клумбăри сарă-хĕрлĕ чечексем куçа илĕртеççĕ. Çанталăк шăрăх тăнă май вĕсене ирĕн-каçăн шăвараççĕ. Çак тĕлĕнтермĕше Вăрнарти аш-какай комбиначĕн сĕт-çу комплексĕнче курма тÿр килчĕ. Республика кунне комбинат Малтикас Ялтăрта çĕнĕ витепе кĕтсе илчĕ. Ăна савăнăçлă лару-тăрура уçма ЧР ял хуçалăх министрĕ Сергей Артамонов, патшалăхăн тĕп ветеринари инспекторĕ Сергей Скворцов, «Чăвашçăкăрпродукчĕ» пĕр-лешÿн тĕп директорĕ Владимир Яковлев тата ыттисем те хутшăнчĕç.**



Сăнÿкерчĕке www.cap.ru сайтран илнĕ.

### Хушма ĕç выранĕ

Пысăк лаптăкра çĕнĕ технологипе çĕкленĕ витесем ретĕн-ретĕн вырнаçнă. Пĕри теприн-чен хăватлă, илемлĕ. Нумай пулмасть туса лартнă витере таса, çутă. Хĕвел çути чÿречерен, маччаран ÿкет. Сывлăш та уçă. Ĕнесене кăкарман. Пурĕ 1000 пуç вырнаçмалла кунта. Хальлĕхе вăл çурма пушă-ха. Анчах çулталăк вĕçленнĕ тĕле тулмалла. Сĕт сумалли залра харăсах 40 ĕне тăмалла. Чĕртавар пăрăх тăрăх тÿрех холодильника çитет. Çавна май унăн пахалăхĕ те пысăк. Тислĕк кăларассине, апат парассине механизациленĕ. Дояркăсем валли канмалли пÿлĕм, душ кабинисем пур.

Министр палăртнă тăрăх – кун пек комплексем çĕршывра та нумай мар. 2015 çулта проекта Раççей Ял хуçалăх министерствинче конкурспа суйласа илнĕ. Ăна хута янăшăн тăкакăн пĕр пайне бюджетран саплаштараççĕ. Проектăн пĕтĕмĕшле хакĕ 133,4 млн тенкĕ. Çак вăхăтра 10,1 млн тенкĕ субсиди куçнă ĕнтĕ. Вăрнарти аш-какай комбиначĕ чĕртавар туса илет, тирпейлесе хăех сутать.

– Тавар туса илекенсемпе туянакансем хушшинче посредниксем пулманни халăха йÿнĕ хакпах паха апат-çимĕçпе тивĕçтерме пулăшать, – палăртрĕ Сергей Геннадьевич. – Рынок тапхăрĕнче ыттисен те çак мелпе ĕçлеме хăнăхса, куçса пымалла.

Вăрнарти аш-какай комбиначĕн директорĕ Николай Аливанов каланă тăрăх – витене парăма кĕмесĕр предприяти укçитенкипе тунă. Комбинатра пурĕ 260 çын вăй хурать. Уйăхри вăтам шалу 17 пин тенкĕ ытларах. Çĕнĕ корпус хута кайни тепĕр 20 çынна ĕçпе тивĕçтерме май парать.

Выльăх-чĕрлĕх отраслĕнче те кăтартусем лайăх. Иртнĕ çул 6215 тонна сĕт туса илнĕ. Ку 2014 çулхипе пăхсан 135,4 процент. Ĕне пуçне – 5671 кг. Кăçал пĕлтĕрхи çак тапхăртипе танлаштарсан кăтарту 25,7 процент ÿснĕ.

### Сĕт тупăшлă!

– Чăваш халăхĕ мĕн ĕмĕртен выльăх-чĕрлĕх тытнă. Паянхи куна илсен унăн йышĕ чаксах пырать. Пирĕн тĕллев – комбината хамăр чĕртаварпа туллин тивĕçтересси. Сысна какайĕ çителĕклех туса илетпĕр. Ĕне ашĕ çитсе пымасть. Çавăнпа ăна 50 процент таран кÿршĕри регионсенчен туянма тивет. Выльăх ÿстермесен аш та, пăру та пулмасть. 2011 çулта 1 пин пуç вырнаçмалăх ĕне вити хута ятăмăр. Кĕтÿ ÿссех пырать. Паянхи кун сăвăнаканнисем кăна 1300 пуç. 2015 çулхи ака уйăхĕнче тепĕр вите тума тытăнтăмăр. Строительсем лайăх ĕçлерĕç, кĕске хушăрах вĕçлерĕç. Сĕт туса илни тупăшлă-и паян? Тупăшлă! 2015 çулта сĕт хăйхаклăхĕ пирĕн 11 тенкĕ те 40 пуса ларнă. Унăн тупăшлăхĕ 47 процентпа танлашрĕ. Малашне те кĕтĕве ÿстерессĕн, 2018 çул вĕçленнĕ тĕле сăвăнаканнисен йышне 2 пин пуçа çитерессĕн. Çĕнĕ витере ĕçлеме 3 дояркă йышăнтăмăр. Унсăр пусне механизаторсем, специалистсем те кирлĕ пулĕç. Çапах ĕç-хĕле механизациленĕ май йыш пысăк мар. Эпир куллен 22 тонна сĕт ăсататпăр. Çывăх вăхăтра вăл 25-26 тонна çитмелле, – терĕ Николай Аливанов.

Выльăх-чĕрлĕх йышлă усранă май усă куракан лаптăксем те пысăк. Пĕрчĕллĕ тата пăрса йышши культурăсем кăна 4528 гектар йышăннă. Выльăх апачĕлĕх 647 гектар куккурус акнă. Республикăра кунта чи малтан куккурус вăррине вырма тытăннă. Кăçал ăна 1 пин гектар çинчен вырса илесшĕн.

Хăнасем хире те çитсе курчĕç. Куккурус пилĕк таран çитĕннĕ ĕнтĕ. Лаптăкра çумкурăк асăрхаймăн. Хĕл хырăмĕ пысăк. Халĕ ĕçченсем хĕрсех сенаж, утă хатĕрлеççĕ. Кĕçех силос та хывма тытăнмалла. Чĕртавара вырăнта туса илни, тирпейлесе сутни тăкака чакарать, тупăша палăрмаллах ÿстерет.

**Лариса НИКИТИНА.**

### Утçи (çĕртмен 27-мĕшĕ тĕлне)

**Республикăри хуçалăхсем çак вăхăт тĕлне 51 728 гектар çинче нумай çул ÿсекен курăксем çулнă. Елчĕк (6040 гектар), Канаш (4100), Комсомольски (3690), Пăрачкав (3011) районĕсенче лаптăксем самай пушаннă. Утă 37 982 тонна (планăн 52,8 процентчĕ) хатĕрленĕ. Патăрьел, Вăрнар, Комсомольски, Муркаш, Етĕрне, Елчĕк тăрăхĕсенче ешĕл çимĕç самай типĕтнĕ.**

**Сенаж 85 985 тонна хывнă. Ку палăртнин 50,6 процентчĕ. Элĕк, Красноармейски, Вăрмар районĕсенче плана тултарнă. Елчĕк тăрăхĕнчи ĕçченсем вара сĕтеклĕ апата 13 пин тонна ытла хывнă. Шупашкар районĕнче те хастар ĕçлеççĕ, 10310 тонна. Куславкка, Çĕмĕрле тăрăхĕсенче вара ку ĕçе тытăнман-ха.**

**Республикăра кĕрхи культурăсем акма 51 728 гектар çĕр хатĕрленĕ.**

# Туслăхпа пĕрлĕх уявĕ

← 1-мĕш стр.

«Агро-Инновацисем» унитари предприятийĕн директорĕ Николай Васильев ĕçе пуçăнакан фермерсем бизнес планне, ХФХ отчечĕсене хатĕрленĕ чухне тĕл пулакан йывăрлăхсем пирки каласа кăтартрĕ. Çавăн пекех фермерсем пĕрпĕрин опычĕпе паллашрĕç. Сăмахран, Çĕмĕрле районĕнчи Денис Харитонов 2013 çулта фермер ĕçне пуçăнакан гранта çĕнсе илнĕ. Çак укçа-тенкĕпе вăл 18 пуç майракаллă шултра выльăх туяннă. Вĕсен шутне çулсерен ÿстерсе пырать çамрăк. Çавна май малашне çемье ферми уçма ĕмĕтленет. «Ялта ĕçлеме, пуранма пулать, – тет вăл. – Паллах, йывăрлăхсем те тĕл пулаççĕ, вĕсене парăнмалла мар».

Уява пухăннисем тĕп хулари Сад микрорайонĕнчи Фермер урамне çитсе курчĕç. Кунта суту-илÿ ярмăркки тăваççĕ. Кашни фермер хăйĕн таварне аренда тÿлевĕсĕр çур çул сутма пултарать.

Хĕрлĕ тÿремре Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев «Фермер хуçалăхĕ – ăнăçлă ĕç выранĕ» конкурс çĕнтерÿçисене числарĕ.

«Чи çамрăк фермер» номинацире Денис Харитонов (Çĕмĕрле районĕ) çĕнтерÿçĕ сертификатне тивĕçрĕ. «Хресчен (фермер) хуçалăхĕн тухăçлă старчĕ» ята Ольга Григорьева (Етĕрне районĕ) илчĕ. «Социаллă позицири хастарлăхшăн» номинацире Решит Санзяпов (Патăрьел районĕ) палăрчĕ. Алина Афанасьева (Муркаш районĕ) вара «Ăрусен çыхăнăвĕ» тĕлĕшпе çĕнтерчĕ.



Михаил Игнатьев фермер ĕçне пуçăнакансене, çемье фермисен, çавăн пекех ял хуçалăх потребитель кооперативĕсен ертÿçисене сертификат парса хавхалантарчĕ.

### Юхрĕ юрă таврана

Кăçалхи Республика кунне Элĕкре те палăртрĕç. Ентешсем паллă тапхăра тĕплĕ хатĕрленнĕ: салара тирпейлĕ, хăтлă, урамсенче такăр çул, куçа йăмăхтаракан чечексем.

Уява уснă май Элĕксене, хăнасене Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев, РФ Федераци Пухăвĕн Федераци Канашĕн членĕ Вадим Николаев, ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕн заместителĕ, «Единая Россия» партин Чăваш регион уйрăмĕн секретарĕ Николай Малов тата ытти явапл çынсем саламларĕç.

Уяв Йăлкăшра пуранакансемшĕн яланлăх ырă йĕр хăварчĕ. Çак кун савăнăçлă лару-тăрура фельдшерпа акушер пункчĕ уçăлчĕ. Михаил Игнатьев палăртнă тăрăх – халăха медицина пулăшăвĕпе вырăнта тивĕçтерни ялти пурнăçа лайăхлатмалли условисенчен пĕри шутланать.

Хальхи вăхăтра республикăра 525 фельдшерпа акушер пункчĕ. 2015 çулта Чăваш Енре 100 фельдшерпа акушер пункчĕ тăвас программа вĕçленнĕ. Çапах 2018 çул тĕлне тепĕр 50 çĕнĕ ФАП тума палăртнă. Элĕк районĕнче юлашки вишĕ çулта кăна тăваттă хута кайнă. 2017 çулта вара Мăн Карачурара та пулĕ вăл. Йăлкăшри сиплев çуртне 5 ял çыннисем çÿреме тытăнĕç. Хĕрлĕ хăйăва касса татнă хыççăн хăнасем модульлĕ ФАП-а кĕрсе курчĕç.

Салари Совет Союзĕн Геройĕ М. Ефимов ячĕллĕ лапамра ăсталанă техникăсен «XXI ĕмĕрти Кулибин» тата ачасен «Модельсен тĕнчи» конкурс фестивалĕ иртрĕ.

Уçă пĕлĕт айĕнче уçăлнă «Тури чăвашсен этника культури» парк-музейĕнчен те халăх таталмарĕ. Тури чăвашсен йăли-йĕркине, пурнăçне туллин сăнласа панă кунта. Ĕç çыннин çулталăкне халалласа ял тăрăхĕсем хăйсен этнохуçалăхĕн ăсталăхĕпе паллаштарчĕç.

Уявра районăн хастар ĕçченĕсем Хисеп грамотине тивĕçрĕç. Нумай ачаллă çемьесене çĕр лаптăкĕсен сертификатне, пурăнмалли çурт-йĕр тăвакансене социаллă тÿлев свидетельствине пачĕç.

«Хĕлхем» спорт комплексĕ умĕнчи лапамра илемлĕ юрă-кĕвĕ, ташă Элĕксене, хăнасене чыйлайччен савăнтарчĕç.

**Валентина МАКСИМОВА,**
**Лариса АРСЕНТЬЕВА.**

ТĔЛПУЛУ

# Çамрăксемсĕр ял илемсĕр

**Ял хуçалăхне аталантарасси, çамрăксене тăван çĕре юратма вĕрентесси, вĕсене ялтах хăварасси пирки калаçрĕç «Хыпар» Издательство çурчĕн ĕçченĕсемпе Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕн ректорĕн должноçне нумаях пулмасть йышăннă Андрей Макушев.**

Чăн та, халĕ асăннă отрасльпе кăсăкланакан çамрăк сахал. Ытларах «таса ĕçе» кăмăллаççĕ вĕсем. Хăшпĕр ашшĕ-амăшĕ те ачисене хуланалла ăсатма тăрăшать. Хваттер туянса парать, унтах тĕплентерет. Çапла майпа ял ватăлать.

Çамрăксене çак çул-йĕртен пăрас тĕллевпе академи малашне ял шкулĕсенче аграри класĕсем уçасшăн. Паллах, ĕмĕте пурнăçлама ЧР Вĕренӳ тата ЧР Ял хуçалăх министерствисем пулăшасса шанать ректор. Вĕсем ятарлă классем пулĕç. Вĕренекенсем хушма пĕлӳ паракан программăпа ăс пухĕç. Унсăр пуçне республикăри пысăк агропредприятисене тухса çӳреме, вĕсен ĕçĕ-хĕлĕпе паллашма май пулĕ. Çавăн пекех академипе те тăванлашĕç, тĕп хулари музейсемпе театрсене çитсе курĕç. Урăхла каласан, çакăн пек классенчен район элити пуласса шанаççĕ. Лайăх вĕренекенсене стипендипе хавхалантарма шухăш пур. Ачасен хăйсен тумĕ пулмалла.

Академие вĕренме кĕнĕ чухне, паллах, вĕсем çăмăллăхсемпе усă курĕç. «Аграри класĕнче пĕлӳ пухнă çамрăксен 40-50 проценчĕ хăйсен шăпине ял хуçалăхĕпе çыхăнтарсан эпир савăннă пулăттăмăр», – терĕ Андрей Евгеньевич.

Районсенчен тĕллевлĕн вĕренме килекенсене те хапăл тăваççĕ вĕренӳ учрежденийĕнче. Ытларах ĕç династине малалла тăсакансене кăмăллаççĕ. Ара, улми йывăççинчен аякка ӳкменни куçкĕретех.

Хальхи вăхăтра тĕрлĕ енлĕ аталаннă специалистсене ытларах хаклаççĕ. Сăмахран, техника юсама пĕлмен инженера кам хисеплĕ? Çавăнпа та унăн слесарь те, токарь те пулмалла. Ку ĕçсене алла илме академирех вĕрентĕç. Аудиторире ларса та лайăх агроном пулаймăн. «Çĕр тухтăрĕсен» уй-хирпе туслашмалла. Çавна май аслă шкулăн 225 гектар çĕр лаптăкĕ пур. Унта ĕç отрячĕсем вăй хураççĕ. Сăмахран, пулас агрономсем кăçал уй-хир карттине йĕркеленисĕр пуçне лаптăка удобрени хывас, вăрлăх акас тĕлĕшпе тăрăшнă. Малашне Шупашкар районĕнчи усă курман çĕрсене арендăна илсе ĕçе кĕртме ĕмĕтленеççĕ.

Ял хуçалăх отраслĕнче специалистсем çитменни те вăрттăнлăх мар. Хăшпĕр ертӳçĕ вылăх тухтăрне, хамăр тăрăхра тупайманран, ют регионран илсе килет. Çавăнпа та вĕсене хăйсен тĕллевлĕн вĕрентсе кăларма тăрăшмалла. Пĕлӳ илнĕ вăхăтра предприятиорганизаци шутĕнчен стипенди парса хавхалантарсан та аван. Паллах, ĕçлеме вырнаçсан пурăнмалли условисем те пулччăр.

Ветфельдшерсене малараха Патăрьелĕнчи агропромышленноç тата Вăрнарти ял хуçалăх техникумĕсенче хатĕрленĕ. Халĕ çак уйрăмсене хупнă. Чăн-чăн тухтăр пулас тесен вара нумай тăрăшмалла. Ахальтен мар çынна сиплекен врач аслă шкул хыççăн ординатура, интернатура пĕтерет. Вылăх тухтăрĕ вара 5 çул вĕреннипех çырлахать. Унăн та чĕрĕ чуна сиплемелле-çке. Ку пĕлӳ уншăн çителĕксĕр. Çавăнпа та малашне Вăрнарти ял хуçалăх техникумĕнче ветфельдшер уйрăмне çĕнĕрен йĕркелес шухăш пур. Каярахпа вĕсем пĕлĕвне академире тăсĕç.

Ял хуçалăх профессийĕ малашлăхсăр тенине илтме тӳр килет. Çавна май ашшĕ-амăшĕ ачисене тислĕк хырма ярасшăн мар. Чĕркуççи таран пылчăк çăрасси те чĕр нуша. Унсăр пуçне ĕç укçи те сахал. Çав вăхăтрах аграрие халĕ çĕнĕ йышши техникăсемпе усă курнине, çулсерен çĕнĕ технологипе ĕçлекен фермăсем хута кайнине те асра тытмалла. ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев калашле ял хуçалăхĕ халĕ «тĕпсĕр шăтăк» мар.

«Тин ĕçе вырнаçнă ветеринар шалăвĕ – 13-15 пин тенкĕ. Ĕçе пуçăнакан хăть хăш специалиста та тӳрех 30 пин тенкĕ памаççĕ. Çакна та шута илмелле: ял хуçалăхĕнче вăй хуракан специалистсене çурт-йĕр валли субсиди уйăраççĕ», – палăртрĕ Андрей Макушев.

Çĕршывра «Земство тухтăрĕ» программа ăнăçлă ĕçлет. Чăн та, ăна пула врачсем ялти больницăсене ĕçе вырнаçма тытăнчĕç. Ӳсĕм куç умĕнчех. Ял хуçалăхĕнче тăрăшакан специалистсем валли патшалăх çакнашкал программа йĕркелесен питĕ аван пулмалла. Мĕншĕн тесен ял пурне те тăрантарать. Доярка пулмасан ĕне сăвăнмасть, çĕр ĕçченĕ уй-хире тухмасан тырпул акăнмасть, çăкăр çитĕнмест. Ертӳçĕ хăй пĕччен нимĕн те тăваймасть. Специалистсем вара ватăлаççĕ. Вĕсене улăштарма çамрăксем кирлĕ. Яшсемпе хĕрсене паян вĕрентсе хатĕрлемесен кая юлатпăр. Кая юлсан каю шăтасси куçкĕрет.

Кашни ял вăл – хăй пĕр пĕчĕк çĕршыв. Унта такам та кирлĕ: вĕрентекен, тухтăр, культура çынни, çĕр ĕçченĕ... Вĕсемсĕр ялăн малашлăхĕ çуках.

**Валентина ПЕТРОВА.**

ĔÇ ДИНАСТИЙĔ

# Уйкасри Гусаровсем

Етĕрне районĕнчи Уйкасра пурăнакан Зоя Ильиничнăпа Николай Иванович Гусаровсем тăватă ывăл çуратса çитĕнтернĕ. Вĕсен тăватă кин, тăхăр мăнук.

– Хам хĕр çуратаймарăм, вĕсене кинсем парнелерĕç, – терĕ лăпкă та хитре хĕрарăм Зоя Ильинична. Тивĕçлĕ канăва тухиччен уй-хир бригадирĕнче ĕçленĕ вăл.

– Сирĕн хушамат кăсăклантарать. Чăвашра çакăн пек чаплă хушаматпа çӳретĕр, – терĕм эпĕ çемье пуçне, Николай Ивановича. Вăл хăй те калаçма, шӳтлеме кăмăллать.

– Манăн мăн асаттен ашшĕ патша çарĕнче 25 çул салтакра пулнă. Унтан вăл чĕрĕ-сывă, Гусар ятпа таврăннă. Эпĕ астăвасса тĕп килте унăн çар тумĕне ӳкерĕннĕ сăн-ӳкерчĕк те упранатчĕ. Шăпах çавăнтан пуçланнă пирĕн хушамат, – пулчĕ хурав.

Гусаровсен ывăлĕсенчен виççĕшĕ хĕсметре пулнă: Олег – Афганистанра, Сергей – Германире, Саша – Дагестанра. Кил хуçи хăй те салтак çулĕсене Германире ирттернĕ. Кĕçĕн ывăлĕ Юра та вăтам шкул пĕтернĕ хыççăн пиччĕшĕсен çулĕпе кайнă. Малтан полици шкулĕнче вĕреннĕ, кайран Чулхулара куçăмсăр майпа ăс пухнă. Çамрăк Гусаровсем тăваттăшĕ те паян пархатарлă профессисемпе полици уйрăмĕсенче ĕçлеççĕ. Пурте мухтава тивĕçлĕ.

– Ачăрсене пурнăçăн хăш тапхăрĕнче çакăн пек йĕркеллĕ çынсем пулма вĕрентрĕр? – малалла кăсăклантăм эпĕ.

– Сĕтел хушшине хамăрпа пĕрле апат çиме ларма пуçласан. Тепре апатланма чашăк-тирĕк таса пултăр теттĕмĕр ялан, – кăмăллăн калаçрĕ Николай Иванович.

Гусаровсем пĕрмай ĕçре. Хулара мар пулсан – ялта. Аслашшĕ, кукашшĕ кил-çурчĕсене çĕнетсех тăраççĕ, пахчаçимĕç çитĕнтереççĕ, утă хатĕрлеççĕ.

Ашшĕпе амăшĕ ачисем пулăшнипе чылай вылăх-чĕрлĕх, кайăккĕшĕк тытаççĕ.

– Кинсем пĕринчен тепри лайăх, мăнуксемпе те савăнатпăр, – терĕ Зоя Ильинична.

Гусаровсем – туслă, çирĕп çемье. Ырă, сумлă çынсен йăхĕ малалла та тăсăлтăр.

**Людмила БОРИСОВА.**

# «Сарафанлă радио» – виççĕмĕш вырăнта

***Пĕтĕм Раççейри ял хуçалăх çыравне халалласа «Манăн Раççей» сăнӳкерчĕксен конкурсĕ иртрĕ. Жюри членĕсем хушшинче профессионал фотографсем, ӳнерçĕсем пулнă. Вĕсем чи лайăх ĕçсене суйласа илнĕ. Çĕнтерӳçĕсен йышĕнче Чăваш Енрен те пур: пирĕн ĕçтеш, «Хыпар» Издательство çурчĕн фотокорреспонденчĕ Василий Кузьмин. Унăн «Сарафанлă радио» ĕçĕ 3-мĕш премие тивĕçнĕ.***

«Манăн Раççей» конкурса профессионал фотографсенчен тата сăнӳкерчĕк ӳкерме юратакансенчен 3600 ĕç çитнĕ. Çĕнтерӳçĕсене икĕ тапхăрпа палăртнă: малтан «ВСХП-2016» сайтпа усă куракансем кăмăла кайнă ĕçшĕн сасăланă. Çапла майпа 10 автор финала тухнă. Унтан жюри чи лайăх икĕ ĕçе суйланă. Виççĕмĕш призер – чи нумай балл пухаканни. Çĕнтерӳçĕсене укçан призпа хавхалантараççĕ.

Профессионал фотографсем хушшинчи пĕртен пĕр çĕнтерӳçе жюри сасăлавĕпе палăртнă. Чулхулари Андрей Воронин «Вырăс хĕлĕ» ĕçĕпе мала тухса 100 пин тенкĕ премие тивĕçнĕ. Конкурса çитнĕ илемлĕ те кăсăклă сăнӳкерчĕксене Росстатăн фойинче вырнаçтарнă.

Хăйĕн ĕçне пысăка хурса хакласа Василий Кузьминшăн та кăмăллăх пулнă.

– Раççей шайĕнчи конкурсра 3-мĕш вырăн йышăнни маншăн пысăк çитĕнӳ. Чăн та, малтанах иккĕлентĕм унта хутшăнма: çĕршывра пултаруллă çын сахал-им? Ылттисен ĕçĕсемпе паллашнă май иккĕленӳллĕ шухăшсем сирĕлчĕç. Ялрайон тăрăх çӳренĕ чухне ӳкернисене пĕрин хыççăн теприне конкурса тăратма тытăнтăм. Сисмерĕм, 51 ĕçе çитрĕ. Вĕсенче вылăх-чĕрлĕх, тăван тавралăх, ял ĕçченĕсем, республика, хуçалăх ертӳçисем тата ытти те сăнланнă.

– Çĕнтерӳçĕ-сăнӳкерчĕкри кинемейсене ăста «çаклатрăр»?

– Ăна иртнĕ çул Канаш районне кайсан ӳкернĕччĕ. Çулла, шăрăх çанталăк. Хура хурлăхан татакан кинемейсем сасартăк ĕçлеме чарăнчĕç те хĕрсех юмах çапма пикенчĕç. Ахăртнех ялти хыпарсене сӳтсе яврĕç. Хăйсем кадра леккине сисеймерĕç те. Ăнсăртран ӳкернĕскер çĕнтерме пулăшрĕ.



Василий Кузьмин



«Сарафанлă радио» калаçать

Çынсем çак сăнӳкерчĕке уйрăмах кăмăллани тĕлĕнтерчĕ. Пурĕ 1261-ĕн сасăланă. Ял çынни, унăн кулленхи ĕçĕ-хĕлĕ, пурнăçĕ ыттисемшĕн çывăхрах-мĕн. Мана вара хăмла çырлине ӳкерни ытларах килĕшетчĕ...

– **Приз укçине ăçта тăкакламалли палăртса хунă-тăр?**

– Укçине илмен-ха, анчах сапаласа пĕтериччен Пĕтĕм Раççейри ял хуçалăх çыравĕ ячĕпе асăнмалăх парне туянатăп.

**Лариса НИКИТИНА.**

# Кам айăплă?

**? Иртнĕ çул çÿллĕ кĕлеллĕ туфли туянтăм. Пĕлтĕр пĕчĕк ачапа ларнă май тăхăнаймарăм. Кăçал эрнене яхăн тăхăнса çÿрерĕм. Сасартăк кĕлли хуçăлчĕ. Мана юрăхсăр тавар тыттарса яман-ши? Суту-илÿ çуртĕнче укçана тавăрса пама е ăна урăх туфлипе улăштарма килĕшмерĕç – гаранти вăхăчĕ тухнă-мĕн. Мĕн тумалла-ши манăн?**

**Кристина МАТВЕЕВА. Вăрмар районĕ.**

Гаранти вăхăчĕ тухсан та туяннă тавар пахалăхĕ тивĕçтермесен икĕ çулта укçана каялла тавăрма е ăна урăххипе улăштарма май пур. Чăн та, çакна тума пахалăхсăр тавар сутнине çирĕплетмелле. Мĕнле майпа? Сăлтавне пĕлме экспертиза ирттермелле. Пушмакăн гаранти вăхăчĕ тухмасан уншăн сутуçă тÿлет. Тухсан – эсир. Енчен тĕрĕслев сире юрăхсăр тавар сутнине çирĕплетсен лавккан пушмакшăн тата экспертизăшăн та укça тавăрса памалла.

# Çутăпа газ хакланать-и?

**? Кăçалхи утă уйăхĕн 1-мĕшĕнчен электроэнергишĕн тата газшăн ытларах тÿлеме тивнине илтрĕм. Тĕрĕсех-ши çакă? Хаксем ял çыннине çука хăвармĕç-ши?**

**Николай МОРОЗОВ. Шупашкар районĕ.**

2016 çулхи утă уйăхĕн 1-мĕшĕнчен Чăваш Енре электроэнергишĕн тÿлекен хак 6,4 тата 6,6 процент ÿсет.

Хулара газ плитипе усă куракансемшĕн тариф 6,4 процентпа танлашать. Унччен 1 киловатт-сехетшĕн 2,8 тенкĕ тÿленĕ пулсан, халĕ 2 тенкĕ те 98 пус пулĕ.

Хулара тата ялта электроплитапа усă куракансен çутăшăн тÿлекен хак 6,6 процент хăпарать. Малашне 1 киловатт-сехетшĕн 2,09 тенкĕ тÿлеме тытăнĕç (халĕ – 1,96 тенкĕ).

Утă уйăхĕн 1-мĕшĕнчен газшăн та ытларах тÿлеме пуçлатпăр. Вăл та унччченхинчен 2,6 процент ÿсет. Çапла вара пĕр кубла метршăн 5 тенкĕ те 17 пус пулĕ.

# Тÿлевсĕр эмел

**? Тÿлевсĕр рецептпа эмел илсе тăратăп. Хĕрĕм патне хулана темиçе уйăха пурăнма куçнă май эмелсене те саппаслăх туянасшăнччĕ. Анчах аптекăра мана пама килĕшмерĕç. Саккун тăрăх юрамасть иккен.**

**Анна СИДОРОВА. Шупашкар районĕ.**

Саккунпа килĕшÿллĕн ларутăрăва кура (чирлĕ çын вăхăтлăх урăх вырăна пурăнма куçни, аптекăна час-часах çитейменни тата ытти те) чирлисене эмеле саппаслăх пама ирĕк панă: çулталăк вăйра тăракан рецептпа; икĕ уйăхра усă курма кирлĕ чухлĕ.

ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ

# Наркăмăшлă люпин



Люпин

Люпин куракпа сидерат вырăнне усă курни паллă. Хăшĕ-пĕрин шухăшĕпе вăл выльăх апатне те улăштарма пултарать. Анчах кун пеккисем йăнăшаççĕ.

Сидерат культури мĕн чухлĕ вайлăрах, тухăçлăрах, çавăн чухлĕ наркăмăшлăрах. Тĕслĕхрен, "сидерат 38" люпин сорчĕ – йÿне ларакан симĕс удобрени. Унра алкалоид виçи 1,5 процента çитет, çĕре сухаланă чухне шăпах вăл тăпрари чир пуçаракан чылай бактерие аталанма памасть. Çак сорт тухăçлă çитĕнет.

Анчах ăна выльăха пач çитерме юрамасть! Çĕре усă кÿрекен алкалоид питĕ вăйлă наркăмăшлантарать. Уйрăмах сурăхшăн, качакашăн, ĕнешĕн, лашашăн сиенлĕ.

Люпинпа наркăмăшлансан выльăх вăйсăрланать, выртать е пуçне пĕксе тăрать, найкăшать тата шăлне шатăртаттарать. Малтанах каяш тухманнипе аптрать, темиçе кунран варвитти пуçланать. Ÿт температури ÿсет, йывăррăн сывлать. Чир хытă аптăратсан выльăх иккĕмĕш куннех вилме пултарать. Анчах ытларах чухне начарланса тăваттăмĕш кунне ĕмĕрлĕх куçне хупать.

Чир вăраха кайни те пулать. Кун пек чух имшерленет, вар-хырăм ĕçĕ пăсăлать, пăрулаймасть.

Люпин çисе наркăмăшланнине сисен унпа усă курмалла мар. Уксус е тăвар йÿçекĕн шĕвекне памалла. Ĕнене пĕрре ĕçтернĕ чух – 0,5 литр шывра хутăштарнă 30 процентлă уксус йÿçекне 10-40 мл, сурăхпа качакана 5-10 мл. Апат уксусĕпе хутăштарнă виçе 5 хут ытларах пулмалла.

Унсăр пуçне чирлĕ выльăха касторка çăвĕ (е тип çу) пани усăллă: ĕнене – 250-500-шер мл, сурăхпа качакана – 50-100-шер.

Люпинпа наркăмăшлансан выльăха шăк хăвалакан тăварлă эмелпе сиплеме юрамасть.

Вăраха кайнă чир чухне кунсерен шывпа пĕрле 200-400-шер г сахăр пани усăллă.

Пахалăхлă апат çитермелле: çемçе курăк, кишĕр, хĕрлĕ кăшман, анчах беклоки мар.

Выльăха апатламалли люпинăн ятарлă сорчĕсем пур, вĕсенче алкалоид виçи сахал: "надежда", "белозерный 110". Ăна пĕчĕккĕн çитерме хăнăхтармалла, апатра унсăр пуçне тымарçимĕç пулмалла.

# Йывăç-курăк сиплет



**Хурăн кăчкинчен тата çулçинчен** хатĕрленĕ шĕвекпе выльăх вар-хырăмĕ пăсăлсан усă кураççĕ. Кăчка пуçĕ тулса çитсен пуçтараççĕ. Турата сулхăнра типĕтеççĕ, унтан авăртаççĕ. 1 л вĕретнĕ шыва 100 г яраççĕ, 2-3 сехет тытаççĕ, сăрăхтараççĕ те пăрăва кунне 2 хут 50-75 г ĕçтерееççĕ.

Тин çуралнă пăрушăн **лăсăллă йывăç** шĕвекĕ те усăллă. Хыр тата чăрăш пĕчĕк турачĕсене вĕтетеççĕ, 0,9 л шыва 100 г илсе эмаль савăта яраççĕ. Вĕри шыв (70-80 градус) хушаççĕ. Савăта таса пирпе хуплаççĕ, ăшă вырăнта 5-6 сехет лартаççĕ, çиеле пухăннă сăмалаллă хутăша кашкăпа е çăпалапа пуçтарса илеççĕ. Тасатнă хыççăн пăрăва 10-20 мл параççĕ.

**Салтак тÿми** шĕвекĕ пыршăлăха йÿçме памасть, унти газа кăларма пулăшать. Типĕтнĕ чечек пĕр пайĕ валли 10 пай лĕпĕ шыв илеççĕ, 30 минут тытаççĕ. Ун хыççăн сăрăхтарса выльăха 30-50 г ĕçтерееççĕ.

**Вĕлтĕрен çулçи** те сиплĕ. Унра А, С, К витаминсем, каротин, фитонцид, ытти япала нумай. Унăн шĕвекĕ варвиттипе аптранă пăрăва пулăшать. Типĕтнĕ çулçа ăшă шыва (1:10 виçепе) яраççĕ, 40-60 минут лартаççĕ. Пăрăва 300-500-шер г кунне 3-4 хут ĕçтерееççĕ.

ПАХЧАÇĂ

# Çĕр çырли çĕресрен

**Çырла çĕре перĕнмелле мар.** Тĕмĕ айне йывăç кĕрпи сапмалла. Улăм, пленка, хăма, шифер сарса хурсан та юрать. Аврине çемçе кантрапа çыхсан тĕмĕ çĕкленет, çимĕçĕ, чечекĕ çĕре перĕнмест. Çĕрме пуçланисене куллен пуçтарса илмелле.

**Янкар чирĕнчен сыхланма.** 2 стакан йывăç кĕлне 1 витре шывра ирĕлтермелле. Эрнере пĕр хут çимĕçпе тĕмме сирпĕтмелле. Тĕмĕ айне типĕ кĕл е 15-20 г извеç сапмалла. Ăна «фитоспорин» е «цикорин» биопрепаратсемпе сирпĕтмелле. Кун хыççăн 2-3 кунран çимĕçе çиме юрать.

**Ÿсен-тăранпа хÿтĕлемелле.** Çырла йăранĕ тăршшĕпех суханпа ыхра лартмалла. Вĕсем янкар чирне пуçаракан бактерие сарăлма памаççĕ.

**Пулас тухăça упрама кĕркунне çĕр çырлине сулхăн ÿкмен вырăна куçарса лартмалла.** Чечеке ларас умĕн пăхăр хлорĕпе сирпĕтмелле. Ретсем хушшине йывăç кĕрпи сапмалла. Янкар чирне чăтăмлă сортсем суйласа илмелле: **«дружба», «зенит», «деснянка» тата ытти те.**

# Кăчăрт-кăчăрт хăяр

Хăяра шурă янкар ересрен чире чăтăмлă сортсем суйласа илмелле: **«кристина», «крепыш», «красотка», «кузнечик», «марьина роща».** Пахчаçимĕçе чир-чĕртен упрама кăштах йод хушнă шывпа, ыхра шĕвекĕпе сирпĕтмелле (ыхра çулçипе е кĕпçипе усă курсан лайăхрах).

# Томатăн виçĕ вăрттăнлăхĕ



**1** Кашни 3 кунра аялти çулçине тата ытлашши хунавне (тĕп тунапа айккинчи хунав хушшинче çитĕнекеннине) татмалла. Ытлашши чечеке те чĕпĕтсе илмелле. Малтанхин 5-7 чечеке хăвармалла. Çимĕçĕ шултра пулсан 2-3 те çителĕклĕ. Тунинче 5 сапака пулсан ун çинчи 3 çулçине хăвармалла, çитĕнесрен тăррине чĕпĕтсе илмелле.

**2** **Шăварни.** Шăрăх çанталăкра кашни 3 кунра шăвармалла, сулхăн тăрсан – 6 кунра: ирхине е каçхине. Чечеке лариччен пĕр тĕмме 1,5 л шыв кирлĕ, çимĕç тĕвĕленсен – 3 л. Типнĕ тăпрана ерипен шăвармалла, унсăрăн çимĕç хуппи çурăлать. Шыва тымарĕ патне тăкмалла. Ÿсен-тăрана йĕпетсен çимĕç çĕрет. Чи лайăх мел – тумласа шăварни. **Пластик бутылкăн тĕпне касмалла. Анине хупмалла, айккинчен шăтăксем тумалла. Икĕ тĕмĕ хушшине 15 см тарăнăшне пуçĕпе аялалла туса чавса чикмелле, шыв тултармалла. Вăл майĕпен тăпрана сăрхăнать.**

**3** **Фитофтороз.** 10 кунра пĕр хутчен томата трихопол е метронидазол шĕвекĕпе сирпĕтмелле: 10 л шыва 20 таблетка. Эрнере пĕр хут килте хатĕрленĕ шĕвекпе усă курмалла: 10 л шывра 50 г теркăланă ыхра, 1 л йÿçĕхнĕ кефир хутăштармалла. **Тепĕр мел:** 10 л шывра 25 тумлам йод, 1 л тăпăрчă шывĕ хутăштармалла. Е тăвар шывĕпе усă курмалла: пĕр витре шыва 1 стакан тăвар.

Йăран хĕррипе ыхра, пăрса, явăнса ÿсекен фасоль акмалла – вĕсем йăран çине чир-чĕр лекесрен сыхлаççĕ.

# Сад илемĕ – пион

**Пион вăрах вăхăт куçа илĕрттĕр тесен:**

✓ Клумбăри типнĕ çеçкине тÿрех татса илмелле. Анчах çакна асăрханса тумалла, çулçине тĕкĕнмелле мар. Кун хыççăн айккинчи папкисем вăй илеççĕ.

✓ Айккинчи пăрса пысăкăш папкисене татмалла. Туна çинче пĕрне çеç хăвармалла. Вăл лайăх аталанать, çуралать. Виçĕ çулхи ÿсен-тăранăн чечекне кăна татма юрать. Малтанхи икĕ çулта çурăлма памалла мар – тымарне вăй илме чăрмантарĕ. Лайăх аталаннăскерĕн чечекĕ те пысăк, илемлĕ.

✓ Çеçкене ларнă пиона тымарĕ тĕлĕнчен шăвармалла – пĕр тĕмме 3-4 витре. Удобрени – фосфорпа кали хутăшĕ.

СЫВЛĂХ

## Кирлĕ пулĕ

● Çуллахи вăхăтра хăш-пĕр эмелпе усă курма юрамасть. Мĕншĕн тесен вĕсем аллерги пусăрма, çаван пекех хĕвел çинче пулнă хыççăн ÿте пĕçертме май парасçĕ. Енчен те эсир антибиотиксемпе, ыратнине чаракан нестероидлă препаратсемпе, шăк хăвалакан тата юн пусăмĕ висерен ÿснинчен сиплекен, холестерин тата сахăр шайне чакаракан эмелсемпе усă куратăр пулсан асăрханулла пулăр. Кун пирки тухтăрпа канашлăр.

● Шăрăх вăхăтра мунчара милĕкпе çапăннă хыççăн сивĕ душра чÿхенни çулланнă çынсемшĕн сиенлĕ. Вĕрипе юн тымарĕсем сарăлаççĕ. Сивĕ душ хыççăн вара вĕсем туртăнса хутланаççĕ. Çавăнпа та милĕкпе çапăничен чĕрене тĕрĕслеттерме манмалла мар.

## Купăста çулçи

Ÿслĕк е бронхит аптратсан купăста çулçи пулăшть. Унăн икĕ çулçине вĕри шыва чиксе кăлармалла, пыл сĕрмелле. Çурăм, кăкăр çине хумалла. Ăшă тутăрпа пĕркенсе çывăрма выртмалла. Ир енне ÿслĕк çемçелет.

## Пĕвер çирĕп пултăр

Хавшак пĕвере хурăн çулçипе папки пулăшаççĕ. Вĕсенчен хатĕрленĕ шĕвек пĕвер шыççине, цирроза тата ытти хăш-пĕр чире сиплет.

0,5 л вĕретнĕ шыва 2 апат кашăкĕ хурăн çулçи е 1 апат кашăкĕ хурăн папки ямалла, кунтах пĕр чĕптĕм тăвар хушмалла, 1 сехет тытмалла, сăрăхтармалла. Шĕвеке апат умĕн тăватă хут 0,5 стаканшар ĕçмелле.

# Пÿре ыратсан

Пÿре тата шăк хăмпин вăраха кайнă чирĕсене сиплеме энĕç (анис) вăрри пулăшать. Вăл асăннă органсен ĕçне йĕркелет, организма çирĕплетет. 1 стакан шыва 1 чей кашăкĕ энĕç вăрри ярса пĕçермелле, 20 минутран сăрăхтармалла. Шĕвеке пĕр уйăх кунне виçĕ-тăватă хут стаканăн 1/4 пайĕ чухлĕ ĕçмелле.



Энĕç

# Ыйхă вĕçсен

❖ 20 г чăрăш тăрри, 30 г сысна курăкĕ, 30 г катăркас çырли илмелле, шыва ярса вĕретмелле. Сиплĕ шĕвеке кунне виçĕ-тăватă хут 1/3-1/4 стаканшар ĕçмелле.

❖ 15 г кушак курăкĕ, 15 г пыл курăкĕ (мелисса), 20 г шур тăрăллă хыт курăк чечекĕ илмелле, шыва ярса вĕретмелле. Кунне виçĕ хут 1/3 стаканшар ĕçмелле.

❖ 20 г кушак курăкĕ, 20 г чĕре курăкĕ, 10 г энĕç курăкĕ, 10 г шур тăрăллă хыт курăк чечекĕ илмелле, шыва ярса вĕретмелле. Кунне пĕр хут 1/3-1/4 стаканшар ĕçмелле.

# Сахăр пулăшать

Пуç ыратсан çывăрас умĕн икĕ эрне кашни каç 1 апат кашăкĕ сахăр çимелле. Ăна вĕретсе сивĕтнĕ 1 стакан шывпа çăтса ямалла.

# Хĕвелрен хÿтĕленме

Хĕвел çинче кăшт ытларах çÿресенех ÿт типме, кушăрхама пуçлать. Çавăнпа та хĕвеллĕ кунсенче ÿте ытти чухнехинчен уйрăмрах пăхмалла. Сăмахран, çур лимон сĕткенĕпе кăпăшлантарнă çăмарта шуррине пĕр савăта ярса пăтратмалла, 20 минута пите сĕрмелле, лĕп шывпа çумалла. Юлашкинчен нÿретекен крем сĕрмелле.

## Сĕнÿ-канаш

**Ÿт-пÿ виçине чакарас текенсен çулла ытларах симĕс тĕслĕ пахчаçимĕç çимелле, кунне 500 г кая мар. Тип çупа çеç усă курмалла. Çырла та усăллă, анчах ăна сахăрсăр çиме тăрăшмалла. Кун каçа 2 стакан кефир ĕçмелле. Çăкăр виçи вара 70 г иртмелле мар. Кунне 5-6 хутчен апатланмалла.**

*Асăрхаттарни: халăх сĕнекен сывату меслечĕсемпе усă куриччен тухтăрпа канашласа пăхмалла.*

ЮРИСТ КĔТЕСĔ

# Хушма ĕç шанса парсан

**Ыйту:** Çын вăхăтлăха ĕçре çук тейĕпĕр. Унăн тивĕçĕсене тепĕр профессиллĕ (должноçлă) çын ĕç килĕшĕвĕпе хăйĕн ĕçĕнчен уйрăлмасăр пурнăçлама пултарать-и? Темиçе профессие (должноçа) пĕрлештерме юрать-и?

**Хурав:** РФ Ĕçлев кодексĕн 60.2 статйипе килĕшÿллĕн çын официаллă хут çырса килĕшсен çирĕплетнĕ ĕç кунĕ (смена) тăршшĕнче çынна хăй пурнăçлакан ĕç çумне тепĕр профессипе е хăйĕн должноçĕпех çыхăннă хушма ĕç шанса пама пултараççĕ. Çакăншăн укса хушса тÿлемелле.

Çынна шанса паракан тепĕр профессипе (должноçпа) çыхăннă хушма ĕçе профессисене (должноçсене) пĕрлештерсе те палăртма пулать. Хăйĕн профессийĕпе (должноçĕпе) çыхăннă хушма ĕçе тивĕçтерÿ зонине анлăлатса, ĕç калăпăшне ÿстерсе палăртма май пур. Вăхăтлăха ĕçрен кайнă çыннăн тивĕçĕсене пурнăçлама (килĕшÿ тăрăх ĕçрен хăтармасăр) гражданина хăйĕн е урăх профессипе (должноçпа) çыхăннă хушма ĕç шанса пама пулать.

Вăл пурнăçлакан хушма ĕç срокне, мĕн тумаллине тата унăн калăпăшне хут çырса килĕшнĕ тăрăх ĕçпе тивĕçтерекен алă пусса çирĕплетет.

Хушма ĕçе пурнăçлама килĕшменнине ĕçчен палăртнă срокран маларах пĕлтерме те пултарать. Ĕçпе тивĕçтерекенĕн вара пурнăçлама шаннă хушăва асăннă вăхăтран маларах пăрахăçлама ирĕк пур, кун çинчен унăн ĕçчене виçĕ ĕç кунĕ маларах хут çырса пĕлтермелле.

**Елена ЧУРБАНОВА,**
**Шупашкарти Çĕрпÿ Калинин районĕн прокурорĕн заместителĕ, юстици советникĕ.**

# Çанталăка сăнанинчен

♦ Утă уйăхĕнче эрешмен карти нумай пулсан çанталăк лайăх тăрать.

♦ Ула курак çÿлтен вĕçсен ыр çанталăк пăсăлать.

♦ Писен нумай чухне хĕл сивĕ килет.

♦ Уйăхĕпех шăрăх тăрсан раштав уйăхĕнче шартлама сивве кĕт.

♦ Асамат кĕперĕ курăнсан çанталăк улшăнать. Ун çинче сарă тĕс ытларах – ăшăтасса, хĕрли – тепĕр темиçе кун çиллĕ пуласса, симĕсси ытларах – çумăр çăвасса.

♦ Уйăхăн иккĕмĕш çурринче каçхине кăвак пĕлĕтсем явăнсан çывăх вăхăтра çанталăк сивĕтет.

ТĔПЕЛ

## Хăмла çырлинчен варени (пĕçермесĕр)

*Кирлĕ пулать: 1 кг хăмла çырли, 1,5 кг сахăр.*

1. Çырлана тасатмалла, çумалла. Таса алшăлли çине пĕр сий сарса хумалла – лайăх типме. Шывлă пулсан çимĕç юрăхсăра тухать.

2. Мĕнпур çырлана таза е кастрюле ярса нимĕр пуличчен тÿмелле. Çакна тума йывăç тукмакпа усă курсан лайăхрах, С витамин аван упранать.

3. Çырла нимĕрне майĕпен сахăр хушса пăтратмалла. Хупăлчине хупса 8-9 сехет лартмалла. Çак вăхăтра сахăр ирĕлет.

4. Чĕрĕ варение стерилизациленĕ банкăна тултармалла. Пылак çимĕçе холодильникра е сивĕ вырăнта упрамалла.

## Абрикосран

*Кирлĕ пулать (2-2,5 л валли): 1 кг абрикос, 1 кг сахăр, 10 г лимон йÿçекĕ, 1-2 чей кашăкĕ ванилин.*

1) Абрикоса çуса вăррине кăлармалла.

2) Кастрюле çырла, лимон йÿçекĕн шĕвекĕ (1л шыва 10 г) ямалла.

3) Типĕ кастрюле 1,5 стакан шыв, 500 г сахăр ярса сироп вĕретмелле, абрикос тултармалла, хупăлчипе хуплаcа 5 сехет лартмалла, 5 минут вĕретмелле.

4) Варение çулăм çинчен илмелле, 250 г сахăр ярса хутăштармалла. 5 сехет тытмалла, 5 минут вĕретмелле (вĕреме кĕнĕ хыççăн).

5) 4-мĕш пунктра кăтартнă пек тумалла. Вĕренĕ чухне ванилин, лимон йÿçекĕ хушмалла. Вĕри çимĕçе банкăна тултармалла.

***ХИСЕПЛĔ ВУЛАКАНСЕМ! Сирĕн тутлă апат-çимĕç рецепчĕсем, усăллă сĕнÿсем пулсан вĕсемпе хаçатра паллаштарма пултаратăр. Сирĕнтен çырусем, шăнкăравсем кĕтетпĕр.***

ЮРАТНĂ ЮРĂ

## Вăрăм чăрăш тăрринче

*Чăваш халăх юрри*

1. Вăрăм чăрăш тăрринче
Çурта çунмасть теееççĕ.
Ăçтан сунтăр-ха çурти
Йĕри-тавра çавра çил.

2. Купăс сасси пурри пур,
Чупса тухсан илтĕнмест.
Ман тăвансем пурри пур,
Тухса пăхсан курăнмасть.

3. Вĕçен кайăк пулăттăм,
Шур пÿрт тăрне ларăттăм.
Чун юратнă тăвансемпе
Ĕмĕр пĕрле пурнăттăм.

*Асăрхаттарни: кашни йĕркене икшер хут юрламалла.*

ПАЛЛАШУ КĔТЕСĔ



**Эпĕ Юра ятлă. 45 çулта. Ялта пĕчченех пурăнатăп. Çурт-йĕр лайăх, кирпĕчрен купаланă, газпа ăшăтатăп. Пĕрле пурăнма, çирĕп çемье çавăрма хĕрарăм шыратăп. Телефон: 8 903 359 2673.**

***

**Вăтам çулсенчи хусах арçын ялта пурăнма килĕшекен йĕркеллĕ хĕрарăмпа паллашасшăн. Пÿрт кирпĕчрен. Çурта шыв, газ кĕртнĕ. Ĕçлетĕп. Анатолий. Телефон: 8 987 126 0937.**

УЙĂХ КАЛЕНДАРĔ

| Число, кун | | Çĕртме, 30 – кĕçнерникун | Утă, 1 – эрнекун | Утă, 2 – шăматкун | Утă, 3 – вырсарникун | Утă, 4 – тунтикун | Утă, 5 – ытларикун | Утă, 6 – юнкун |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| ХĔВЕЛ | тухать | 3.08 | 3.09 | 3.10 | 3.11 | 3.12 | 3.13 | 3.14 |
| | анать | 20.40 | 20.40 | 20.39 | 20.39 | 20.38 | 20.37 | 20.37 |
| Кун тăршшĕ | | 17.32 | 17.31 | 17.29 | 17.28 | 17.26 | 17.24 | 17.23 |
| УЙĂХ | тăхри | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | çĕнĕ уйăх (13.60) | тулса пырать | тулса пырать |
| | кунĕ | 25-мĕш кун | 26-мĕш кун | 27-мĕш кун | 28-мĕш кун | 29-мĕш кун | 2-мĕш кун | 3-мĕш кун |
| | | Вăкăр паллинче | Вăкăр паллинче | Йĕкĕреш паллинче | Йĕкĕреш паллинче | Рак паллинче | Рак паллинче | Арăслан паллинче |

# Пултарулăхра иксĕлми вăй

**Чăн чăваш хресченĕнче иксĕлми вăй тапса тăрать. Сухаçă-акаçă та вăл, унсăр пуçне кирпĕч купалама та пултарать, платник ĕçне аван пĕлнĕрен çуртне те хăй тăвать. Килте техника пуртан тимĕр шăратма та маçтăр. Тата... йывăçран тĕлĕнмелле илемлĕ япаласем касса кăларать. Эрешĕсене ӳнер шедеврĕсем темелле, пĕр кăлтăк тупаймăн, çав тери паха ĕçсем.**



Елчĕк районĕнчи Кĕçĕн Шăхальте пурăнакан Геннадий Ильич Васильев çинчен пырать сăмах. Çĕр ĕçченĕн çулла пушă вăхăт çукпа пĕрех. Эпир çитнĕ кун та ялти ăстаçă уя курăк çулма васкатчĕ, хăйĕн алĕçĕсемпе паллаштарма ыйтсан сăпайланчĕ, нимĕн тĕлĕнмелли те çук терĕ. Анчах кăтартма хирĕç пулмарĕ.

Куç ытарайми илем мăн çуртпа юнашар ларакан пĕчĕк йывăç пӳртре (ăна Геннадий Ильич хăй ăсталанă) тĕпленнĕ. Кухньăра усă курмалли ывăса, пĕчĕк арчана, ытти вак япалана нумайăшĕ касса кăларать, анчах художник куçĕпе илемлетесси тепĕр шайри ăсталăх мар-и çав?

Ахальтен мар Геннадий Васильевăн "ылтăн çӳçинче" профессионал художник картинисем тăрăх хатĕрленĕ ĕç нумай. Уйрăмах ЧР тава тивĕçлĕ, халăх художникĕн, патшалăх премийĕсен лауреачĕн Владимир Иванович Агеевăн произведенийĕсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Йывăçпа ĕçлекенскер мĕншĕн ăна суйласа илни те паллă пулчĕ – арăмĕн тăванĕ иккен.

